Муркаш район хаҫачӗ

# Ҫӗнтерӳ ялавӗ

1944 ҫулхи ҫу уйӑхӗн 5-мӗшӗнченпе тухать

1 (7962) № * Юн кун, 2012 ҫулхи кӑрлач (январь) уйӑхӗн 11-мӗшӗ * Хакӗ ирӗклӗ

Январӗн 12-мӗшӗ – РФ прокуратура ӗҫченӗн кунӗ

## Саккунлӑх хуралӗнче



Январӗн 12-мӗшӗнче Раҫҫей прокуратурине йӗркеленӗренпе 289 ҫул ҫитрӗ. Ҫак органа 1722 ҫулта Пӗрремӗш Петӗр патша указӗпе килӗшӳллӗн туса хунӑ. Ҫавӑнтанпа ӗнтӗ Раҫҫей прокуратури ҫӗршывра саккуна тӗрӗс пурнӑҫланине, Раҫҫей Федерацийӗн Конституцине пурте пӗр тан пӑхӑннине ҫирӗп тӗрӗслет.

Муркаш районӗнче прокуратура – Чӑваш Республикин тата Раҫҫей прокуратурисен тытӑмӗнчи пай – йӗркеленнӗренпе январӗн 16-мӗшӗнче утмӑл виҫӗ ҫул пулать.

Эсир сӑн ӳкерчӗкре куракан район прокурорӗ С. Фирсов **(варринче)** ертсе пыракан пултаруллӑ та пысӑк опытлӑ, яваплӑха туякан коллектив район ҫыннисене тӗрлӗ йывӑрлӑхра пулӑшма яланах хатӗр. Никамшӑн та вӑрттӑнлӑх мар, право тӗлӗшӗнчи пӗлӳ ҫынсен тивӗҫлӗ шайра мар, ҫавна май пирӗн ума тӗрлӗ йывӑрлӑх тухать те ӗнтӗ. Ун пек чухне эпир тӗрӗслӗх, ҫӑлӑнӑҫ шыраса прокуратура ӗҫченӗсен патне ҫул тытатпӑр. Професиллӗ уяв ячӗпе районти прокуратура ӗҫченӗсене чӑтӑмлӑх, ҫирӗп сывлӑх сунатпӑр.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА**
**сӑн ӳкерчӗкӗ.**

**ПРОКУРАТУРӐН ХИСЕПЛӖ ӖҪЧЕНӖСЕМ, ВЕТЕРАНӖСЕМ!**

Сире хӑвӑрӑн професси кунӗ ячӗпе чун-чӗререн саламлатӑп.

Районти лару-тӑру лӑпкӑ пуласси сирӗн ӗҫӗртен, эсир хӑвӑр тивӗҫе тӳрӗ кӑмӑлпа туса пынинчен нумай килет. Эсир районта пурӑнакансем, предприятисемпе организацисен ертӳҫисем саккуна пӑхӑнччӑр тесе тӑрӑшатӑр. Кулленхи ӗҫ-пуҫлӑра та пайӑ, паллах, районти суд приставӗсемпе, районти шалти ӗҫсен пайӗпе, налук органӗсен ӗҫченӗсемпе, право йӗркине сыхлакан пур органсемпе те тачӑ ҫыхӑнса ӗҫлетӗр. Граждансен Конституципе пӑхса хӑварнӑ прависемпе ирӗкӗсене хӳтӗлетӗр. Хӑвӑрӑн кулленхи ӗҫӗрпе эсир пурнӑҫра тӗрӗслӗх ҫӗнтернине, кашнинех саккуна пӑхӑнса пурӑнмаллине кӑтартса паратӑр. Тавах сире ҫакӑншӑн.

Эсир малашне те хӑвӑрӑн тивӗҫӗре тӳрӗ кӑмӑлпа пурнӑҫласа пырасса шанатӑп. Саккунлӑх сирӗн малашнехи ӗҫре те тӗп вырӑнта пултӑр. Пурне те сире ҫирӗп сывлӑх, вӑрӑм кун-ҫул, телей сунатӑп. Ӗҫӗр яланах ӑнса пытӑр. Ҫемьере вара ӑнлануpa килӗшӳ пултӑр!

**В. КАЛИНИН,**
**район администрацийӗн пуҫлӑхӗн тивӗҫӗсене пурнӑҫлаканӗ.**

Пичет кунӗсем ячӗпе

**ПИЧЕТ ӖҪӖН ХИСЕПЛӖ ӖҪЧЕНӖСЕМ, ВЕТЕРАНӖСЕМ, ХАҪАТ ТУСӖСЕМПЕ ВУЛАКАНСЕМ!**

Сире ҫывхарса килекен Раҫҫей пичечӗн тата Чӑваш пичечӗн кунӗсем ячӗпе чун-чӗререн саламлатӑп.

Эсир пурнӑҫра пулса иртекен ҫӗнӗлӗхсемпе улшӑнусем ҫинчен вулакан патне тӗрӗс тата вӑхӑтра ҫитерессишӗн тимлетӗр. Хаҫат страницисенче район пурнӑҫне пур енлӗн ҫутатма тӑрӑшатӑр. Вулакан хӑйӗн шухӑшне хаҫат урлӑ калани вара эсир ун патне хӑвӑр калас тенине ҫитернине, хӑвӑрӑн тивӗҫӗре кирлӗ пек пурнӑҫланине кӑтартса парать.

Малашне эсир район пурнӑҫне татах та анлӑрах, тулнинрех ҫутатасса шанатӑп. Интереслӗ материалсен шучӗ ӳссех, вулакансен йышӗ хушӑнсах пытӑр. Ҫавна май хӑвӑрӑн ӑсталӑха та ӳстерсех пырӑр. Районта пурӑнакансене вара район хаҫачӗпе туслӑ пулма, кашни килтех ӑна ҫырӑнса илме сӗнетӗп.

Пурсӑра та ҫирӗп сывлӑх, телей, ӗҫре ӑнӑҫусем сунатӑп. Вулакансемшӗн район хаҫачӗ чи юратнӑ хаҫат пулса юлтӑр. Ҫивӗч перо ӑстисем вара ку ҫапла пултӑр тесе хӑйсенчен килнине йӑлтах тучӑр.

**В. КАЛИНИН,**
**район администрацийӗн пуҫлӑхӗн тивӗҫӗсене пурнӑҫлаканӗ.**

Раҫҫейре

## 2012 ҫул – Раҫҫей историйӗн ҫулталӑкӗ

Ҫакна ҫирӗплетсе Раҫҫей Федерацийӗн Президенчӗ Д. Медведев указа алӑ пуснӑ. Указ общество енчен Тӑван ҫӗр-шывӑн историйӗ ҫине тата тӗнче историйӗн процесӗсенчи Раҫҫей ролӗ ҫине тимлӗх уйӑрма тивӗҫ.

Президент Раҫҫей Федерацийӗн правительствине йӗркелӳ комитечӗ туса хума тата Раҫҫей историйӗн ҫулталӑкӗнчи тӗп мероприятисен планне ҫирӗплетме хушнӑ.

Республикӑра

## Президент мар – пуҫлӑх

Республика Конституцине улшӑнусем кӗртнӗ май 2012 ҫулхи январӗн 1-мӗшӗнчен республика ертӳҫине президент мар, пуҫлӑх тесе чӗнеҫҫӗ.

Чӑваш Ен Президенчӗн постне республикӑн Аслӑ Канашӗ 1991 ҫулхи августӑн 29-мӗшӗнче ҫирӗплетнӗ. 1993 ҫулхи декабрӗн 26-мӗшӗнче пӗрремӗш президента Николай Федоров суйланнӑ. Вӑл региона тӑватӑ срок ертсе пынӑ. 2010 ҫулхи августӑн 29-мӗшӗнче Михаил Игнатьев иккӗмӗш президент ячӗпе инаугураци иртнӗ.

Ҫырӑнтару – 2012

### ХАКЛӐ ВУЛАКАНСЕМ!

**«Ҫӗнтерӳ ялавӗ» хаҫата 2012 ҫулхи февраль уйӑхӗнчен илсе тӑма малалла ҫырӑнтараҫҫӗ.**

**Пилӗк уйӑха ҫырӑнмалли хак: 159 тенкӗ те 75 пус.**

***Хаҫат редакцийӗ.***

Черетлӗ ҫитӗнӳ

## «Ҫӗнтерӳ ялавӗ» – Пӗтӗм Раҫҫейри конкурс ҫӗнтерӳҫи

***Район хаҫачӗ Пӗтӗм Раҫҫейри «Золотой фонд прессы – 2012» конкурс ҫӗнтерӳҫи пулса тӑчӗ.***

***Раҫҫейри пахалӑхлӑ тата обществӑлла пӗлтерӗшлӗ хаҫатсемпе журналсен клубне йӗркеленӗренпе ултӑ ҫул ҫитрӗ. Район хаҫачӗ виҫҫӗмӗш хут ҫак фонда кӗме тивӗҫ пулчӗ.***

***Лауреатсене пахалӑх палли, Хисеп грамоти парса Мускаврa февраль уйӑхӗнче ҫӗнӗ медиасезона усӑ чухне чысласҫӗ.***

***Район хаҫачӗн тиражӗ ӳснине те палӑртма кӑмӑллӑ. Кӑҫалхи пӗрремӗш номер 4520 экземплярпа (пӗлтӗрхи – 4224 экз.) пичетленсе тухрӗ. Республикӑри район хаҫачӗсем хушшинче ку – тӑваттӑмӗш кӑтарту.***

***Ҫӗнӗ ҫула ҫӗнӗ ҫитӗнӳсемпе пуҫларӑмӑр, апла пулсан вӑл ӑнӑҫуллӑ пултӑр!***

***Хаҫат тусӗсене асӑннӑ ӳсӗмсемпе саламлатпӑр!***

**Райхаҫат редакцийӗ.**

Чӑваш Республикин пуҫлӑхӗн стипендиачӗсем

## Пуласлӑх – ҫамрӑксенче

***Чӑваш Республикин пуҫлӑхӗ Михаил Игнатьев пултарулӑхпа палӑрса тӑракан ҫамрӑксемпе студентсене стипенди парасси ҫинчен хушу кӑларчӗ. Ҫапла вара кӑҫал пирӗн районтан вун пилӗк ҫамрӑк ҫак хавхаланӑва тивӗҫрӗ. Иртнӗ ҫул та стипендие тивӗҫнисем вун пиллӗкӗн пулнӑ.***

**Игорь Аркадьевич Смирнов**, Шетмӗпуҫӗнчи Культура ҫурчӗн директорӗ.

**Алина Александровна Димитриева**, Йӳҫкассинчи библиотека ертӳҫи.

**Ирина Владимировна Волкова**, Муркашри тӗп больницӑн педиатр врачӗ.

**Егор Александрович Ярухин**, Муркашри вӑтам шкулта вӗренекен.

**Юлия Владимировна Купцалова**, «Муркашри чӑх-чӗп фабрикин» директорӑн право тата кадр енӗпе ӗҫлекен пулӑшуҫи.

**Татьяна Викторовна Малова**, Ҫатракасси ял тӑрӑхӗнчи индивидуаллӑ предпринимáтель.

**Кристина Олеговна Павлова**, куҫ курманнисен районти обществӑлла организацийӗн членӗ.

**Изабелла Александровна Матвеева**, Мӑн Сӗнтӗрти вӑтам шкулта вӗренекен.

**Мария Александровна Сытина**, Юнкӑри вӑтам шкулти ачасен обществӑлла пӗрлешӗвӗн лидерӗ.

**Валентина Валериановна Гусева**, Муркаш районӗнчи вӗренӳ учрежденийӗсенчи ҫамрӑк педагогсен совечӗн членӗ.

**Ирина Александровна Воробьева**, «Малыш» ача сачӗн воспитателӗ.

**Дина Рудольфовна Замятина**, Катькас ял тӑрӑхӗнчи ҫамрӑксен канашӗн членӗ.

**Михаил Германович Блинов**, ГИБДД уйрӑмӗн инспекторӗ.

**Геннадий Юрьевич Любимов**, ҫамрӑксен районти суйлав комиссийӗн членӗ.

**Александр Анатольевич Николаев**, куҫ курманнисен районти обществӑлла организацийӗн членӗ.

Пысӑк хавхаланӑва тивӗҫнӗ пултаруллӑ ҫамрӑксене малашне те пысӑк ӑнӑҫусем тума, ҫӗнӗрен те ҫӗнӗ пуҫарусене вӑя кӗртме иксӗлми вӑй-хӑват, ҫирӗп сывлӑх сунас килет.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА.**

Кӗскен

## Мӗн улшӑнчӗ ҫӗнӗ ҫултан?

**ПОЛИЦИ**

Малашне Шалти ӗҫсен министерствин сотрудникӗсене пурне те полицейскисем тесе чӗнмелле. Шалти ӗҫсен уйрӑмӗ вара полици уйрӑмӗ пулса тӑрать.

**ТЕХОСМОТР**

ГАИ сотрудникӗсен водителӗн техосмотр тӑнин талонӗ пуррипе ҫуккине тӗрӗслеме право ҫук. Талон вара ОСАГО полисне илме кирлӗ пулать.

**ШТРАФСЕМ**

Ҫӗнӗ ҫултан тытӑнса ҫулсем ҫинче машинӑсем капланнипе (затор) сыхӑннӑ йӗркене пӑснишӗн штрафсем ӳсрӗҫ:

– малашне светофорӑн хӗрлӗ ҫутипе касса кайнӑшӑн тата хӗреслененекен ҫул ҫине тухсан ун хыҫҫӑн машинӑсем капланса тулчӗҫ пулсан 1000 тенкӗ тӳлеме тивет;

– стоп-лини урлӑ каҫса каякан водителӗн 800 тенкӗ тӳлемелле пулать.

**ТАКСИ**

Малашне таксист касса чекӗ пама тивӗҫ. Кунпа пӗрлех кашни водителӗнех пассажирсем илсе ҫӳреме ирӗк пани пулмалла.

**АЧАШӐН УКҪА ТӲЛЕССИ**

Патшалӑх ашшӗ-амӑшне укҫа тӳлессин виҫине ӳстерет. Ача амӑшӗн капиталӗ 387640 тенкӗпе танлашать. Ача ҫуралсан пӗр хут паракан пособи – 12400 тенкӗ. Ачасене пӑхнӑшӑн паракан тӳлевсем 6 процент ӳсрӗҫ.

# Магазин ăшă кăмăлпа пуян

Суту-илӳ учрежденийĕсенче



Пурнăç улшăнса пынă май эпир паян кашни ĕç никĕсĕнче ăна пурнăçлаканăн культурине пăхатпăр. Ăçта культурăллăрах – çавăнталла çул тытатпăр. Ял культури магазинтан пуçланнăран тавар туянакансем кунти çĕнĕлĕхсене сăнасах тăраççĕ. Сутуçăсен ĕçĕ-хĕлĕ те вĕсен куç хĕрне юлмасть. Çакăнти хăтлă та кăмăллă хутшăнусенчен вăй илмест-и-ха ялсен аталанăвĕ, тавар туяннă май ирттернĕ ăшă калаçура тымарланмасть-и-ха наци проекчĕсене пурнăçлассипе тĕвĕленекен черетлĕ туйăм? Кам епле хурав парĕ те, анчах шăкăл-шăкăл калаçу пысăк шанчăк çуратнине никам та хирĕçлемĕ. Пирĕн кулленхи пурнăçра вара час-часах çавă çитмест те. Кайран вара чавса çывăх та – çыртма çук. Çак шухăшсемпе Мăн Сĕнтĕр райповĕн иртнĕ çулла уçăлнă «Суту-илӳпе услугăсен центрĕн» алăкне уçрăм.

Эсир сăн ӳкерчĕкре (сулахайран сылтăмалла) Надежда Аркадьевна Храмовăпа Екатерина Николаевна Сапожникова сутуçăсемпе коллектива 16 çул ертсе пыракан Елена Анатольевна Одинцовăна куратăр. Вĕсем хăйсем суйласа илнĕ ĕçре пĕрремĕш кун мар вăй хураççĕ. 30–32 çул суту-илӳ ĕçĕнче тимлекен Надеждăпа Елена тин кăна-ха хăйсемпе пĕрле ĕçлеме пуçланă Екатеринăна кулленех ĕçри вăрттăнлăхсемпе паллаштараççĕ.

– Аслă юлташсен тимлĕхĕ йывăрлăхсене çĕнме, ĕçе тĕплĕрех алла илме пулăшать. Тавах вĕсене çакăншăн, – терĕ тавар туянаканăн ыйтăвĕсене тивĕçтерме сентре патне утнă май çамрăк сутуçă. Унăн сăмахĕнченех райпора çамрăксем тĕлĕшпе пысăк тимлĕх пулнине ăнлантăм. Ĕç коллективĕнчи килĕшӳлĕх, тавар туянакансемпе йĕркеленнĕ ăшă кăмăллă хутшăнусем сутуçăсене тăтăшах ĕç планне пурнăçласа пыма пулăшаççĕ. Çапла вара ырă ĕçпе палăраççĕ вĕсем райпо системинче.

2012 çулта та ăнăçу пултăр сире, маттур хĕрарăмсем!

**А. БЕЛОВ сăн ӳкерчĕкĕ.**

## Саламлатпăр



Турай ялĕнче çуралса ӳснĕ, халĕ Муркашра пурăнакан **Елена Викторовна КОЗЛОВĂНА** чаплă юбилейпа чун-чĕререн ырă та ăшă сăмахсемпе саламлатпăр.

Çирĕп сывлăх, вăрăм та телейлĕ кун-çул, тулăх пурнăç сунатпăр. Яланах хаваслă та ырă чунупа çамрăк пул. Кĕрекӳ тăванусемпе пуян пултăр, сĕтел çинчен çăкăр-тăвар ан татăлтăр, чир-чĕр сантан пăрăнса çӳретĕр.

**Саламлаканĕсем: амăшĕ, ывăлĕ, Степановсен çемйи, шăллĕ, çывăх тăванĕсем.**

Муркашра пурăнакан **Раиса Ниловна МАКСИМОВĂНА** сумлă юбилейпа чун-чĕререн юратса та хисеплесе ăшшăн саламлатпăр.

Мăшăрăм, аннем, кукамай, хуняма – эсĕ пирĕншĕн çĕр çинчи чи-чи çывăх çын. Тавах сана ырă кăмăлушăн, иксĕлми чăтăмлăхушăн. Эпир санпа савăнатпăр та, мухтанатпăр та. Сан умăнта çĕре çити пуç таятпăр. Çĕр çинчи мĕн пур ырлăх сан валлиех пултăр тетпĕр.

**Мăшăрĕ, ачисем, ачисен мăшăрĕсем, мăнукĕсем.**



Çĕньял Муркашра çуралса ӳснĕ, халĕ Муркашра пурăнакан **Раиса Ниловна МАКСИМОВА** январĕн 9-мĕшĕнче хăйĕн сумлă юбилейне паллă турĕ. Çав ятпа эпир ăна çирĕп сывлăх сунса ăшшăн саламлатпăр.

Раиса Ниловна, ĕмĕтленнĕ ĕмĕтӳсем пысăк пулччăр, вĕсем яланах пурнăçланса пыччăр. Çемье вучахĕ тикĕссĕн ялкăштăр, унта яланах килĕшӳ, ăнлану, çураçу хуçалантăр.

**Пысăк салампа Николаевсен, Кивалкинсен, Микряковсен, Кирилловсен çемйисем, Анжелика, Аньăпа Люба.**



Хаклăран та хаклă çыннăмăра, аттене, хуньстарике, кукаçине, асаттене, тăвана – Çĕнĕ Чемей ялĕнче пурăнакан **Аверкий Иванович ИВАНОВА** январĕн 10-мĕшĕнче 80 çул тултарнă ятпа чун-чĕререн саламлатпăр. Çирĕп сывлăх, иксĕлми телей, вăрăм кун-çул сунатпăр. Ачусемпе, мăнукусемпе, тăванусемпе савăнса пурăнмалла пултăр.

**Саламлаканĕсем: икĕ ывăлĕ, тăватă хĕрĕ, кинĕ, кĕрӳшĕсем, 9 мăнукĕ, 1 кĕçĕн мăнукĕ, тăванĕсем.**



Орининти пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан вăтам шкулта ĕçлекен **Татьяна Петровна АЛЕКСЕЕВĂНА** сумлă юбилей ячĕпе чун-чĕререн ăшшăн саламлатпăр, çирĕп сывлăх, иксĕлми телей, вăрăм ĕмĕр сунатпăр.

Тулăх пултăр пурнăç сан ялан,  
Сывлăх ан хавшатăр нихăçан,  
Ыр сунатпăр сана кăмăлтан,  
Эсĕ хаклă пире ылтăнран.

**Саламлаканĕсем: пĕрле ĕçлекен учительсем.**



Пирĕн хаклă аннене, кукамая, асаннене – Катькас ялĕнче пурăнакан **Алевтина Кирилловна ЕГОРОВĂНА** çуралнă кунĕ ячĕпе пĕтĕм чунран саламлатпăр. Вăрăм кун-çул, çирĕп сывлăх, тулăх пурнăç сунатпăр.

**Саламлаканĕсем: ывăлĕсемпе кинĕсем, хĕрĕсемпе кĕрӳшĕсем, мăнукĕсем, кĕçĕн мăнукĕ Никита.**

Истори страницисем

# Шкулсем тĕрĕссипе хăçан уçăлнă-ха?

Чăннипех те хăçан уçăлнă-ха пирĕн районта пĕрремĕш шкулсем? Ку ыйту чылайăшне кăсăклантарать пулĕ. Хальхи вăхăтра нимĕнпе те сăлтавланман, документсемпе çирĕплетмен пулсан та шкул юбилейĕсене уявланă тĕслĕхсене тăтăшах курма пулать. Акă нумаях пулмасть район хаçатĕнче Оринин шкулĕн юбилейĕ пирки çырса кăларнăччĕ. Вĕсем хăйсен шкулĕн 150 çулхи юбилейне уявларĕç. Пĕлес килет: мĕнле майпа вĕсем ку датăна паллă тăваççĕ-ха?

Муркаш районĕнче шкулсем уçăлнине халалланă материалсем çук теместĕп, вĕсем чылай. Анчах та вĕсем пĕри те тĕплĕн тĕпчесе хатĕрленĕскерсем мар, документсемпе çирĕплетмен фактсем, пĕр-пĕрне хирĕçлекен самантсем сахал мар.

Шкулсем уçăлни пирки эпир 2002 çулта пичетленнĕ «Муркаш районĕн кĕске энциклопедийĕнчен» пĕлме пултаратпăр. Хăшпĕр шкулсем пирки унта чĕлхеçĕ, филологи наукисен кандидачĕ А. Горшков доцент çырнă. Мĕн пĕлме пулать-ха ку ĕçрен?

**Земство шкулĕсем (училищисем)** 1864 çулхи земство реформи хыççăн уçăлма тытăннă. Муркаш районĕнче земство шкулĕсем 1875 çултанпа кун çути курма пуçăнаççĕ. Ильинкăра кун пек шкул 1875 çулта, Мăн Сĕнтĕрте 1882 çулта, Очăкассинче 1884 çулта уçăлнă. Земство шкулĕсене уес земствисен укçи-тенкипе тытса тăнă. Ытларахăшĕнче 3 çул вĕренмелле пулнă. Вулама, çырма, шутлама вĕрентнисĕр пуçне çут çанталăка тĕпчессипе (естествознание), географипе, историпе пĕлӳ панă. Вĕрентӳпе воспитани ĕçне йĕркелессипе вĕсем чи лайăххисем шутланнă, вĕсенче квалификациллĕ учительсем ĕçленĕ. Хăш-пĕр земство шкулĕсенче арçын ачасемпе хĕр ачасем уйрăмшар ушкăнсенче вĕреннĕ.

**Чиркӳпе прихут шкулĕсем** – Раççейри революцичченхи пуçламăш шкулсем. Вĕсем Патшалăх пурлăхĕн министерствине пăхăнса тăнă, 1864 çултан тытăнса – Синода. Пирĕн район территорийĕнче пĕрремĕш чиркӳпе прихут шкулĕсем 1884 çултанпа йĕркеленме тытăннă (Муркашра – 1884 çулта, Катькасра – 1885 çулта, Нискассинче – 1885 çулта, Ахманере – 1886 çулта т. ыт. те). Вĕсем 1 класлисем (2 çул вĕреннĕ) тата 2 класлисем (4 çул вĕреннĕ) пулнă. Кунта тĕп предметсене – Турă саккунне тата чиркӳ юррисене – вырăнти чиркӳ священникĕ ертсе пынă.

**Хута вĕрентекен (грамота) шкулсем** – Раççейри революцичченхи ведомство е харпăр хăйĕн шкулĕсем. Вĕсенче ачасене вулама, çырма, шутлама хăнăхтарнă. Халĕ Муркаш районне кĕрекен ялсенче кун пек шкулсем 1884 çултанпа уçăлма тытăннă (Шаптакра – 1884 çулта, Çĕмĕрткассинче – 1885 çулта, Мăн Турханта – 1886 çулта). Преподавательсем пулса священник тата учитель ĕçленĕ. Кун пеккисем пулман чухне – хутла пĕлекен хресчен е демобилизаци йĕркипе çартан таврăннă салтак, чиркӳ дьяконĕ е ыт. те. Хута вĕрентекен шкулсем вĕрентӳ шайĕпе прихут училищисенчен каярах тăнă. 1891 çулта вĕсене чиркӳпе прихут шкулĕсен правипе Синода панă.

Малалла хăш-пĕр статьясенчен шкулсем пирки çырса кăтартнисене илсе пăхар.

1844 çулта **Шурча** ялĕнче А. Архангельский священник Патшалăх пурлăхĕн министерствин арçынсен пĕр класлă училищине уçнă. 1870 çулта И. Софийский священник çуртĕнче хĕрарăмсен пĕр класлă училищине уçнă.

**(Малалли пулать).**

**О. ТАРАСОВ.**

Муркаш ялĕ.

Шкулсенчен хыпарлаççĕ

# Пулăшма пултарнишĕн савăнатăп

Урамра хĕл варри. Сивĕ кунсем – уйрăмах кайăксемшĕн йывăр вăхăт, мĕншĕн тесен çак вăхăтра вĕсене апат тупса çиме питĕ кансĕр. Йывăр вăхăтра кайăксене эпир пулăшма пултаратпăр. Çавăнпа хĕл кунĕсенче сырăшсем ăсталатпăр та ĕнтĕ. Унта тырă, хĕвел çаврăнăш, типĕтнĕ çырла т. ыт. те хурса паратпăр.

Кăçалхи хĕл кунĕсенче вĕçен кайăксене пулăшу парас тĕллевпе эпĕ те сырăш туса çакрăм. Ăна сарă пĕсехеллĕ кăсăясемпе çерçисем питĕ кăмăлларĕç. Кашни кун апатланаççĕ вĕсем унта. Итлетĕп те – темĕн чĕвĕлтетеççĕ. Тав тăваççĕ пулас.

Хамăн ĕç кайăксене усăллă пулнишĕн эпĕ савăнатăп.

**Вероника НИКОЛАЕВА,**  
**Чуманкассинчи вăтам шкулта 4-мĕш класра вĕренекен.**

Редакци почтинчен

# Иртни – хыçра, пуласси – умра

Вăхăчĕ самай иртрĕ пулин те эпĕ хам сăмахăма иртнĕ суйлав пирки пуçарам. Мана çав тапхăр питĕ хумхантарчĕ, чуна тиврĕ.

Манпа пĕр вăхăтри çынсем лайăхах астăваççĕ ĕнтĕ коммунистсен вăхăтне. Эпĕ хам тĕрĕс шухăшăма палăртма пачах та именместĕп. Вăл вăхăтри хура-шура хам куçпа хам курнă, çав тапхăрти нушана чăтса ирттернĕ. Ĕçлеме ӳркенмен, кил-çурт лартакан, выльăх-чĕрлĕх йышлă усракан çынсене тасаран кулак ятне парса аякри çĕрсене ăсатрĕç вĕт. Çапла майпа çемьесене салатрĕç, ача-пăчана хĕл кунĕнче шурă юр çине тăратса хăварчĕç, вăл шутра кăкăр ачисене те. Çав вăхăта аса илсен халĕ те куççуль тухать. Юлташсем, пулнă вĕт-ха çакăн пекки.

Халĕ ав çурт-йĕр çаврăкан çемьесене патшалăх ятарлă пулăшу уйăрать – ĕçле, ан ӳркен кăна. Тем тесен те халĕ ырлăх тапхăрĕ. Шутласа пăхăр-ха, ача çуратса ӳстерекенсене мĕн чухлĕ тĕрлĕ пулăшу туса памарĕ пулĕ патшалăх: ача пăхакана пысăк укçа-тенкĕ парать, ĕçмелли-çимелли, тăхăнмалли мĕн кăна çук – тин кăна çуралнисем валли те, пысăкраххисем валли те. Халĕ ав ача сачĕсем çĕнĕрен çĕклеççĕ, унта кайма май килмен ачасен амăшĕсене валли патшалăх компенсаци уйăрать.

Пирĕн вăхăтрисен ачисем мĕнле çитĕнчĕç-ха? Хамăр ĕçе тухса кайнă вăхăтра пĕчĕк ачасене марля çине çăкăр чăмлакĕ хурса параттăмăр, ĕмсе çăтса ярасран чавсинчен çыхаттăмăр, кунĕпе йĕпе кипкепе кун каçнă – аса илес те килмест! Ĕç хыççăн киле çитсен ача çине пăхса макăрас килетчĕ. Хальхи пек ача çуратас умĕн тата хыççăн кану вăхăчĕ паман. Тата çĕр улми кăларнă вăхăтра кăкăр ачи пуррине пăхмасăрах виçе çапса параççĕ. Тавах Турра ун чухнехи çынсене вăй-хăват панишĕн. Халĕ пурнăç чăннипех те тулăх, çавăнпа та эрех-сăрапа айкашаççĕ. Урăхла сăмах кунта çук.

Эпĕ хам та ултă ача çуратрăм, мĕн кăна тӳсмерĕм. Пирĕн аларан çурла каймарĕ, тăтăш ĕçленипе алăсем шыçатчĕç, юнланатчĕç – пурпĕр чăтнă. Хальхи çынсем ĕçе кайма кахалланаççĕ, пысăк ĕç укçи ыйтаççĕ. Вăл вăхăтра талăкра 200 грамм çăкăр паратчĕç ĕçленĕшĕн. Халĕ вара пире мĕн çитмест-ха, кам паян çапла тертленет? Тен паянхи халăх ытлашши иртĕхсе кайрĕ. Кашни çуртра кăвак çулăм çунать вĕт, малтан вара çĕклемпе шĕшкĕ хăрăкĕ йăтса килнĕ, пӳртре улăм çунтарнă. Вăл вăхăтра вăрмансене сыхлатчĕç. Ача-пăча тумтирне пӳртре типĕтнĕ. Пĕчĕк пӳртрех путекки те, пăрушĕ те сиккеленĕ. Паянхи пурнăçа хурлама сăлтавĕ çуках тесе шутлатăп.

Эпĕ чылай хушă йăла ыйтăвĕпе тивĕçтерессипе ĕçлерĕм. Çулран çул пысăк çитĕнӳ турăм, малти вырăна тухрăм. Ун пирки Мускав калаçакан радиопа хыпарларĕç. Çитĕнĕве кура Мускава та кайма тиврĕ. Вăл вăхăтра тивĕçлĕ çынсен коммунистсен парти ретне тăмалла вĕт. Эпĕ унта тăма тивĕç мар, эпир мăшăрпа венчет тăнă, халăх йăли-йĕркине йышăннă. Эпир венчет тăни вара çӳлти ĕçченсене килĕшмест. Пирĕн киле «Чайка» машинăпа килсе çитрĕç. Мĕн тума кирлĕ сана венчет, парти ретне тăмалла теççĕ. Объяснительнăй çыртараççĕ. Ку çеç те мар, вилнĕ çынна пытарма та халăх йăлийĕркипе юрамасть вăл вăхăтра – мăшкăл вĕт. Çын хамăр йăла-йĕркене пăхăнни, Турра ĕненни япăх пулăм мар. Çыннăн ыррине ĕмĕтленмелле, малашлăха туртăнмалла.

Антип Иванович Кузьмин пирки те асăнса хăварас килет. Кахал çынсем хĕтĕртнипе ăна кулак шутне кĕртрĕç. Мăшăрне тăватă ачапа юр çине тăратса хăварчĕç, хăйне вунă çуллăха ют тăрăха ăсатрĕç. Аса илсен халĕ те çанçурăм тăрăх сивĕ чупса иртет. Çапла вара икĕ ача хĕне кайса çĕре кĕчĕ. Антип Иванович сакăр çул тĕрмере ирттерчĕ. Унтан вăрçа ăсанчĕ, аманса тăван яла таврăнчĕ. 1962 çулта виçĕ тĕрлĕ инкек тӳссе ирттернĕ хыççăн ăна реабилитацилерĕç. Çапларах ним айăпсăр нушаланнă вăл вăхăтри чылай çын.

Эпĕ хĕн-хур ачи, район старейшинăсен канашĕн членĕ, хамăр тăрăхри ветерансен канашĕн ертӳçи, коммунистсене «Единая Россия» партипе пĕрлешме тата пĕрлехи йĕркеллĕ пурнăçшăн малашне пĕр шухăш-тĕллевпе тăрăшма чĕнсе калатăп. Правительство ертӳçисем – «Единая Россия» парти членĕсем. Евангелире вара «кĕтӳçĕ выльăхне ăçталла хăвалать, çавăнталла кайсан тĕрĕс пулать» тенĕ. Малашнехи суйлавра вара пирĕн çакăн пирки манас марччĕ. Патшалăх пирĕншĕн пуриншĕн те пĕр пек тăрăшать!

Çитес суйлав йĕркеллĕ, тивĕçлĕ шайра иртессе шанас килет. Ответлă ĕçченсен вара ытларах ответлăха туйса тимлесчĕ.

Пирĕн район – пирĕн кил. Районта хамăр районшăн тăрăшакан çынсем ĕçленипе Муркашсен ятне халĕ пур çĕрте те пĕлеççĕ, пире ыттисем умне тĕслĕхе лартаççĕ. Çакă та – хальхи ырă утăм.

**О. ТЯМИНА,**  
**Катькас ял тăрăхĕнчи ветерансен канашĕн ертӳçи.**

# Телепрограмма

с 12 по 15 января 2012 года

## ЧЕТВЕРГ, 12.01

### ПЕРВЫЙ

5.00, 9.00, 12.00, 15.00, 18.00, 23.30, 3.00 Новости
5.05 «Доброе утро»
9.20 «Контрольная закупка»
9.50 «Жить здорово!»
10.55 «Право на защиту»
12.20 «Модный приговор»
13.20 «Понять. Простить»
14.00 Другие новости
14.20 «Хочу знать»
15.20 Т/с «ОБРУЧАЛЬНОЕ КОЛЬЦО»
17.05 «Свобода и справедливость»
18.50 «Давай поженимся!»
19.55 «Пусть говорят»
21.00 «Время»
21.30 Т/с «БРАК ПО ЗАВЕЩАНИЮ. ВОЗВРАЩЕНИЕ САНДРЫ»
22.30 «Человек и закон»
23.50 «Городские пижоны». «Хью Хефнер: Плейбой, активист и бунтарь»
2.20, 3.05 Х/ф «КАЖЕТСЯ, Я ЛЮБЛЮ СВОЮ ЖЕНУ»
4.05 «Участковый детектив»

### РТР

5.00 Утро России
9.05 «С новым домом!»
10.00 «О самом главном»
11.00, 14.00, 16.00, 20.00 Вести
11.50 «КУЛАГИН И ПАРТНЕРЫ»
13.00 Т/с «ТАЙНЫ СЛЕДСТВИЯ»
14.50 Вести. Дежурная часть
15.05 Т/с «ВСЕ К ЛУЧШЕМУ»
16.50 Т/с «ЕФРОСИНЬЯ. ПРОДОЛЖЕНИЕ»
17.55 Т/с «ХОЗЯЙКА МОЕЙ СУДЬБЫ»
18.55 «Прямой эфир»
20.50 Спокойной ночи, малыши!
21.00 Т/с «ЛАСТОЧКИНО ГНЕЗДО»
23.40 Свидетели. «Жизнь продолжается. Олег Табаков»
0.40 Вести +
1.00 «Профилактика»
2.05 Т/с «ДЕВУШКА-СПЛЕТНИЦА-2»

### ЧУВАШИЯ

6.07-6.10, 6.35-6.41 Вести-Чăваш ен
7.07-7.10, 7.35-7.41 Утро Чувашии
8.07-8.10, 8.35-8.41 Утро Чувашии
9.05-10.00 Телеюрă
11.30-11.50 Вести-Чăваш ен
14.30-14.50 Вести-Чувашия
16.30-16.50 Вести-Чăваш ен
20.30-20.50 Вести-Чувашия

### КУЛЬТУРА

6.30 «Евроньюс»
10.00 «Наблюдатель»
11.15 Х/ф «ХОЛОДНО-ГОРЯЧО»
12.25 Д/ф «Евгений Ташков»
13.10 Д/ф «Мир после динозавров»
14.00 «Провинциальные музеи». «Тарусские дали»
14.30 Х/ф «КОМЕДИЯ ОШИБОК»
15.40, 19.30, 23.30 Новости культуры
15.50 М/с «Детские рассказы»
16.20 Т/с «ЗАГАДОЧНЫЕ ИСТОРИИ ЭНИД БЛАЙТОН»
16.45, 1.55 Д/с «Обезьяны-воришки»
17.10 Д/с «Истории в фарфоре». «Кто не с нами, тот против нас»
17.40 Вадим Репин, Юрий Башмет и ГСО «Новая Россия». «Испанская ночь»
18.35 Д/ф «Машина времени»
19.45 Главная роль
20.05 Черные дыры. Белые пятна
20.45 Д/ф «Ангелы и демоны Владимира Волкова»
21.30 Д/ф «Земля динозавров»
22.40 «Культурная революция»
23.50 Х/ф «ШАТОБРИАН»
1.35 И. Штраус. «Не только вальсы»
2.00 2.25 Д/с «Истории в фарфоре». «Кто не с нами, тот против нас»

### НТВ

5.55 «НТВ утром»
8.30 Т/с «МОРСКИЕ ДЬЯВОЛЫ-4»
9.30, 15.30, 18.30 Обзор. Чрезвычайное происшествие
10.00, 13.00, 16.00, 19.00 Сегодня
10.20 «Внимание: розыск!»
10.55 «До суда»
12.00 Суд присяжных
13.25 Т/с «СУПРУГИ»
16.25 «Прокурорская проверка»
17.40 «Говорим и показываем»
19.30 Т/с «ПАУТИНА-5»
21.30 Т/с «ЗВЕРОБОЙ»
23.15 Сегодня. Итоги
23.35 «Судебный детектив»
0.40 «Всегда впереди. Уральский федеральный университет им. Б.Н. Ельцина»
1.40 «Таинственная Россия: Ярославская область. Призраки на границе миров?»
2.25 «Чета Пиночетов»
2.55 Т/с «МАСКВИЧИ»
3.35 Т/с «БЕГЛЕЦ-3»
5.10 Т/с «2,5 ЧЕЛОВЕКА»

## ПЯТНИЦА, 13.01

### ПЕРВЫЙ

5.00, 9.00, 12.00, 15.00, 18.00 Новости
5.05 «Доброе утро»
9.20 «Контрольная закупка»
9.50 «Жить здорово!»
10.55 «Право на защиту»
12.20 «Модный приговор»
13.20 «Понять. Простить»
14.00 Другие новости
14.20 «Хочу знать»
15.20 Т/с «ОБРУЧАЛЬНОЕ КОЛЬЦО»
17.05 «Жди меня»
18.50 «Поле чудес»
19.55 «Пусть говорят»
21.00 «Время»
21.25 Старый Новый год на Первом
1.35 Х/ф «АФЕРА»
4.05 Х/ф «ОТСКОК»

### РТР

5.00 Утро России
9.05 Мусульмане
9.15 «С новым домом!»
10.10 «О самом главном»
11.00, 14.00, 16.00, 20.00 Вести
11.50 «КУЛАГИН И ПАРТНЕРЫ»
13.00 «Мой серебряный шар. Георгий Милляр»
14.50 Вести. Дежурная часть
15.05 Т/с «ВСЕ К ЛУЧШЕМУ»
16.50 Т/с «ЕФРОСИНЬЯ. ПРОДОЛЖЕНИЕ»
17.55 Т/с «ХОЗЯЙКА МОЕЙ СУДЬБЫ»
18.55 «Прямой эфир»
20.50 Спокойной ночи, малыши!
21.00 Новогодний Голубой огонек
2.50 Х/ф «СТАРЫЕ ВОРЧУНЫ РАЗБУШЕВАЛИСЬ»
4.25 Т/с «ДЕВУШКА-СПЛЕТНИЦА-2»

### ЧУВАШИЯ

6.07-6.10, 6.35-6.41 Вести-Чăваш ен
7.07-7.10, 7.35-7.41 Утро Чувашии
8.07-8.10, 8.35-8.41 Утро Чувашии
11.30-11.50 Вести-ПФО
14.30-14.50 Вести-Чувашия
16.30-16.50 Вести-Чăваш ен
20.30-20.50 Вести-Чувашия

**На канале «Россия-2»**

19.15-19.25 Вести-Спорт-Чувашия

### КУЛЬТУРА

6.30 «Евроньюс»
10.00, 15.40, 19.30, 23.40 Новости культуры
10.20 Х/ф «ПОБЕДИТЬ ДЬЯВОЛА»
12.05 Д/ф «Ангелы и демоны Владимира Волкова»
12.50 Д/ф «Земля динозавров»
14.00 «Письма из провинции». Тюмень
14.30 Х/ф «КОМЕДИЯ ОШИБОК»
15.50 М/с «Детские рассказы»
16.15 Т/с «ЗАГАДОЧНЫЕ ИСТОРИИ ЭНИД БЛАЙТОН»
16.40, 1.55 Д/с «Обезьяны-воришки»
17.10 Д/с «Истории в фарфоре». «Фарфоровые судьбы»
17.40 Билет в Большой
18.20 Д/ф «Соловьиная песня Антона Григорьева»
19.00 Смехоностальгия
19.45 «Искатели». «Клад Стеньки Разина».
20.30 «Линия жизни»
21.25 Новый год в компании с Владимиром Спиваковым
0.00 Х/ф «ЛОПЕ ДЕ ВЕГА»
1.40 Пьесы для скрипки исполняет Н. Борисоглебский
2.00 2.25 Д/с «Истории в фарфоре». «Фарфоровые судьбы»
2.50 М/ф «Дополнительные возможности пятачка»

### НТВ

5.55 «НТВ утром»
8.30 Т/с «МОРСКИЕ ДЬЯВОЛЫ-4»
9.30, 15.30, 18.30 Обзор. Чрезвычайное происшествие
10.00, 13.00, 16.00, 19.00 Сегодня
10.20 Спасатели
10.55 «До суда»
12.00 Суд присяжных
13.25 Т/с «СУПРУГИ»
16.25 «Прокурорская проверка»
17.40 «Говорим и показываем»
19.30 Т/с «ПАУТИНА-5»
21.30 Т/с «ЗВЕРОБОЙ»
23.10 «Очень Новый Год»
3.05 «Чета Пиночетов»
3.45 Т/с «МАСКВИЧИ»
4.25 Т/с «БЕГЛЕЦ-3»
6.00 Т/с «2,5 ЧЕЛОВЕКА»

## СУББОТА, 14.01

### ПЕРВЫЙ

5.30 Х/ф «Барышня-крестьянка»
6.00, 10.00, 12.00, 18.00 Новости
6.10 Х/ф «БАРЫШНЯ-КРЕСТЬЯНКА»
7.45 «Играй, гармонь любимая!»
8.30 М/ф «Джейк и пираты из Нетландии»
9.00 «Умницы и умники»
9.45 «Слово пастыря»
10.15 «Смак»
10.55 «Музыкант»
12.15 Х/ф «МОЯ МАМА - НЕВЕСТА»
13.40 К 290-летию прокуратуры России. Юбилейный концерт
14.50 Х/ф «КАРНАВАЛЬНАЯ НОЧЬ-2, ИЛИ 50 ЛЕТ СПУСТЯ»
18.15 «Кто хочет стать миллионером?»
19.20, 21.20 «Две звезды»
21.00 «Время»
22.40 Х/ф «НОЧЬ В МУЗЕЕ 2»
0.35 Х/ф «ПЛОХИЕ ПАРНИ»
2.50 Х/ф «НА ОСТРОЙ ГРАНИ»
5.10 «Участковый детектив»

### РТР

5.05 Х/ф «РАЗ НА РАЗ НЕ ПРИХОДИТСЯ»
6.35 «Сельское утро»
7.05 Диалоги о животных
8.00, 11.00, 14.00 Вести
8.20 «Военная программа»
8.50 Субботник
9.30 «Городок»
10.05 «Национальный интерес»
11.20 Вести. Дежурная часть
11.55 «Честный детектив»
12.25, 14.30 Т/с «ДОМ У БОЛЬШОЙ РЕКИ»
16.05 Субботний вечер
18.05 «Новогодний парад звезд»
20.00 Вести в субботу
20.45 «Аншлаг. Старый Новый год»
0.30 «Девчата»
1.05 Х/ф «СЛУЖАНКА ТРЕХ ГОСПОД»
2.50 Х/ф «СТАРЫЙ НОВЫЙ ГОД»
5.10 Комната смеха

### ЧУВАШИЯ

8.10-8.20 Местное время. Вести-Чăваш ен
10.05 Для вас, любимые. Концерт по заявкам
10.50-11.00 Шевле («Солнечный зайчик» на чувашском языке)
14.20-14.30 Вести-Чувашия

**На канале «Россия-2»**

9.10-9.15 Вести-Спорт-Чувашия
11.50-12.00 Вести-Спорт-Чувашия

### КУЛЬТУРА

6.30 «Евроньюс»
10.00 Библейский сюжет
10.35, 0.35 Х/ф «ПОСЛЕДНИЙ МЕСЯЦ ОСЕНИ»
11.55 Красуйся, град Петров! Мосты.
12.20 «Личное время». Юрий Куклачев
12.50 Х/ф «ГОСПОЖА МЕТЕЛИЦА»
13.50 «Партитуры не горят»
14.20 К 95-летию со дня рождения Евгения Лебедева. «Неистовый лицедей»
15.00 Спектакли-легенды. Евгений Лебедев, Мария Призван-Соколова, Кирилл Лавров, Людмила Макарова в спектакле «МЕЩАНЕ». Постановка Г. Товстоногова
17.35 Д/с «Планета людей». «Джунгли. Люди деревьев»
18.30 Большая семья. Роман Виктюк
19.25 «Романтика романса». Станислав Пожлаков
20.20 Х/ф «ВЕСНА МИКЕЛАНДЖЕЛО»
23.25 «Лучано Паваротти и друзья. Лучшее»
1.55 «Заметки натуралиста»
2.00 2.25 «Личное время». Юрий Куклачев

### НТВ

6.25 Х/ф «БОМЖИХА»
8.00, 10.00, 13.00, 19.00 Сегодня
8.20 «Золотой ключ»
8.45 «Академия красоты с Ляйсан Утяшевой»
9.20 «Готовим с Алексеем Зиминым»
10.20 Главная дорога
10.55 Кулинарный поединок с Оскаром Кучерой
12.00 Квартирный вопрос
13.20 Своя игра
14.10 Х/ф «УЧИТЕЛЬ В ЗАКОНЕ»
16.05, 19.25 Т/с «УЧИТЕЛЬ В ЗАКОНЕ. ПРОДОЛЖЕНИЕ»
23.15 «Народ против шоу-бизнеса». Спецпроект
0.20 Х/ф «ПАРК ЮРСКОГО ПЕРИОДА»
2.45 «Чета Пиночетов»
3.20 Т/с «МАСКВИЧИ»
4.05 Т/с «2,5 ЧЕЛОВЕКА»

## ВОСКРЕСЕНЬЕ, 15.01

### ПЕРВЫЙ

5.50, 6.10 Х/ф «КОРОЛЕВ»
6.00, 10.00, 12.00 Новости
8.15 «Армейский магазин»
8.50 М/ф «Гуфи и его команда»
9.15 «Здоровье»
10.15 «Непутевые заметки»
10.35 «Пока все дома»
11.30 «Фазенда»
12.15 Новый «Ералаш»
12.50 Т/с «МУР»
16.55 «20 лучших песен года»
19.10 Х/ф «Зайцев, жги!»
21.00 Воскресное «Время»
22.00 «Большая разница»
23.05 «Специальное задание»
0.15 Т/с «ДЕТРОЙТ 1-8-7»
1.55 Х/ф «ГАЗЕТА»
4.00 «Участковый детектив»

### РТР

6.00 Х/ф «БЕЗУМНЫЙ ДЕНЬ»
7.20 Вся Россия
7.30 Сам себе режиссер
8.20 «Смехопанорама»
8.50 Утренняя почта
9.30 «Сто к одному» Неделя в городе
11.00, 14.00 Вести
11.10 «С новым домом!» Идеи для вас
11.25, 14.30 Т/с «ДОМ У БОЛЬШОЙ РЕКИ»
16.05 «Смеяться разрешается»
18.20 Х/ф «ВСЕ НЕ СЛУЧАЙНО»
20.00 Вести недели
21.05 Х/ф «Новые приключения Аладдина»
23.20 Х/ф «КРЫЛЬЯ АНГЕЛА»
2.00 Х/ф «СИЯНИЕ»
4.05 Комната смеха

### ЧУВАШИЯ

10.20-11.00 Вести-Чувашия. События недели

**На канале «Россия-2»**

9.25-9.30 Вести-Спорт-Чувашия
12.15-12.20 Вести-Спорт-Чувашия

### КУЛЬТУРА

6.30 «Евроньюс»
10.00 «Обыкновенный концерт с Эдуардом Эфировым»
10.35, 0.20 Х/ф «ЖЕНИТЬБА»
12.10 «Легенды мирового кино». Эмиль Лотяну
12.40 М/ф «Степа-моряк». «Мороз Иванович». «Желтый слон». «О рыбаке и рыбке»
13.35 Д/ф «В мире дикой природы. Обитатели пустыни: медоед и пустынный хамелеон»
14.30 «Что делать?»
15.15 Х/ф «ВАЛЕНТИН И ВАЛЕНТИНА»
16.45 «Лучано Паваротти и друзья. Лучшее»
18.00 Итоговая программа «Контекст»
18.40 Золотая коллекция «Зима - Лето»
20.45 Х/ф «ВЕСНА МИКЕЛАНДЖЕЛО»
22.25 Мастер-класс Никиты Михалкова в Мелихове
23.25 «Риверданс». Концерт в Нью-Йорке

### НТВ

5.15 М/ф «Снежная королева»
6.20 Х/ф «БОМЖИХА- 2»
8.00, 10.00, 13.00, 19.00 Сегодня
8.15 «Русское лото»
8.45 Их нравы
9.25 Едим дома
10.20 «Первая передача»
10.55 «Развод по-русски»
12.00 Дачный ответ
13.20 Своя игра
14.10, 19.25 Т/с «УЧИТЕЛЬ В ЗАКОНЕ. ПРОДОЛЖЕНИЕ»
23.15 Х/ф «КАК ПРОЙТИ В БИБЛИОТЕКУ?»
1.05 Х/ф «ПОЛИЦЕЙСКИЙ И МАЛЫШ»
2.50 Х/ф «ПОСЛЕДНЯЯ ЗИМА»
4.30 Т/с «МАСКВИЧИ»
5.10 Т/с «2,5 ЧЕЛОВЕКА»

---

Шкулччен хи вĕренӳ учрежденийĕсенче

# Пĕрле тăрăшни усă кӳрессе шанатпăр

Ачасен сывлăхне упрасси тата ăна çирĕплетесси – ашшĕ-амăшĕсемшĕн те, пирĕншĕн те, воспитательсемшĕн, яланах тĕп вырăнта пулнă. Сывлăха тĕрлĕ енлĕн çирĕплетме пулать. Вăл шута урамра уçăлса çӳрени те кĕрет. Кун пирки акă шкулччен хи вĕренӳ учрежденийĕсем пурнăçласа пыракан çĕнĕ требованисенче те каланă: ачасен кунсерен виçĕ сехетрен кая мар уçă сывлăшра уçăлса çӳремелле.

Ача садĕнче çак вăхăта тĕрĕс тата интереслĕ йĕркеленинчен нумай килет. Мĕншĕн тесен урамра ачасем хăйсене ирĕклĕ тытса, тĕрлĕ хусканусем туса, вăй виçмелли вăйăсем выляса кăна хăйсен сывлăхне çирĕплетме пултараççĕ.

Унсăр пуçне тата урамра уçăлса çӳрени çут çанталăка юратма, таврара курăма анлăлатма, пĕр-пĕрин хушшинчи туслă çыхăнăва çирĕплетме, ачасем хăйсем тума пултаракан ĕçе пурнăçлама та пулăшать.

Хĕллехи тапхăр вара – ачасемшĕн уйрăмах юратнă та кĕтнĕ вăхăт. Ачасем чун каниччен çунашкапа сăртран ярăнма, йĕлтĕрпе ăмăртса чупма, юртан тĕрлĕ кĕлеткесем тума пултараççĕ-çке. Вĕсем хăйсен ытларах вăхăтне ача садĕнче ирттернине эпир пурте чухлатпăр. Çавăнпа та ачасемшĕн хĕллехи кунсем асра юлччăр, савăнăçлă иртчĕр, çав вăхăтрах вĕсен сывлăхĕшĕн те усăллă пулччăр тесе хамăртан мĕн килнине пĕтĕмпех тума тăрăшатпăр.

Юр çунă çуманах хамăра уйăрса панă вырăна сăрт туса лартрăмăр, ăна шывпа сапса шăнтрăмăр. Лабиринт та хатĕрлерĕмĕр. Хамăр юратнă пепкесене асамлă юмах тĕнчине илсе çитерсе савăнтарас та килчĕ. Çапла вара ачасемпе пĕрле тăрăшсах юртан юмахри сăнарсене те ăсталарăмăр. Кĕлеткесене илемлетрĕмĕр: сăрăпа та сăрларăмăр, татăк-кĕсĕксенчен чечексем касса кăларса вĕсене кĕлеткесем çинче шăнтса лартрăмăр. Кунтах Хĕл Мучипе Юр Пике те «тупăнчĕç». Симĕс чăрăшĕ те юнашарах.

Эпир ачасемпе пĕрле тăрăшса ĕçлени сая каймасть пулĕ тесе шутлатпăр. Пĕрле ĕçлени, пĕрле выляни малашне те усă кӳрессе шансах тăратпăр.

**Е. КРОЛИКОВА, В. ЯСТРЕБОВА, «Солнышко» ача садĕнчи вăтам ушкăнăн воспитателĕсем.**

---

Фермăсенчи хĕл кунĕсем

# Тирпейлĕ сарайра ĕçлес кăмăл ӳсет

Раштав уйăхĕн вĕçĕнче район администрацийĕн ял хуçалăх пайĕ обществăлла выльăх-чĕрлĕх патĕнче ĕçлекенсен черетлĕ пĕрлехи кунне ирттерчĕ. Район администрацийĕн ял хуçалăх пайĕн тĕп эксперт специалисчĕпе Т. Алексеевăпа çав кун ăратлă выльăх ĕрчетессипе специализациленекен «Свобода» ял хуçалăх производство кооператив-заводра пулса куртăмăр.

Уяр çанталăк-и е пĕлĕтлĕ кун, уяв кунĕ-и е паллă юбилей – ĕçлекенĕн ĕçе тухмаллах. Выльăх-чĕрлĕх пăхаканăн çак вăхăтра пурнăçлама пултарайман ĕç пирки каласма та ирĕк çук. Ăратлă выльăх ĕрчетекен “Свобода” ял хуçалăх производство кооператив-заводра каланине ĕçпе çирĕплетесси – кун йĕркинчи çирĕп йăла. Вуншар çул пырать вăл, çĕр-шыври политикăпа экономикăн нихăш хумĕ айне те пулман. Мĕнре-ха сăлтавĕ? Çак ыйту çине хурав тупма хуçалăх ертӳçипе В. Ананьевпа, хуçалăхăн тĕп зоотехникĕпе Э. Замятинăпа «Свобода» хуçалăхăн Кашмашри тата Çатракассинчи сĕт фермисене çитрĕмĕр, В. Никитин ертсе пыракан сысна фермин ĕçченĕсемпе тĕл пултăмăр. Фермăсенчи тасалăх, ĕçпе кану пӳлĕмĕсенчи тирпейлĕх, выльăхсен апатне упрас, ăна выльăхсене парас çĕрти перекетлĕх куç умĕнчен каймарĕ. Тирпейлĕ хуçан вара ĕçĕ-пуçĕ ăнни пирки эпир калана сăмах мар.

– Выльăх-чĕрлĕх валли çăва тухиччен апат-çимĕç çителĕклĕ, çавна кура производство та, сĕт сăвăмĕ те тивĕçлĕ шайра пырать тесе шутлатпăр. Тухăçлă ĕçшĕн патшалăх пулăшăвĕ пурри ыранхи кунпа пурăнма хавхалантарать. Çакна ферма ĕçченĕсем те ăнланни çĕнĕ тĕллевсем çуратать. Хĕле лайăх хатĕрленнипе урамри сивĕ те ĕç пӳлĕмĕсенчи ăшăпа ылмашăнать. Çакă ĕçлеме тивĕçлĕ условисем пурри пирки калать, – терĕ пирĕн тĕллевсемпе паллашсан хуçалăх ертӳçи В. Ананьев.

Хуçалăх ертӳçин сăмахне Кашмашри тата Çатракассинчи сĕт фермисене тата Кашмашри сысна фермине çитсен унта ĕçлекенсем те çирĕплетсе пачĕç. Сарайсене хĕле тĕплĕ хатĕрленĕ пулин те юсавçăсен бригади вак-тĕвексене çийĕнчех пĕтерсе пырассине кулленхи ĕç тесе пурнăçласа пырать. Хуçалăхри ырă йăлапа ферма сывăхне кĕркуннех çителĕклĕ утă-улăм турттарса хунă. Тислĕк вăхăтра тухать. «Ĕçлеме кăмăл пысăк», – терĕç пире ферма ĕçченĕсем Çĕнĕ çул саламĕсене йышăннă май.

– Хуçалăх председателĕ выльăх-чĕрлĕх отраслĕ çине тимлĕ пăхни пире те хамăр ĕçе тĕплĕн тума хистет. Ĕç укçине вăхăтра илетпĕр. Кунпа пĕрлех ĕçлемелли çи-пуçпа тивĕçтересси те вăхăтлă пулса пырать. Хуçалăх ертӳçи, зоовper специалистсем ĕçлекенсемпе пĕр чĕлхе тупни кадрсен ыйтăвне те кун йĕркине кăлармасть. Ку вара – ыранхи куна шанса вăй хумалли тĕкĕ, – терĕ ирхи сăвăма вĕçленĕ Елена Кириллова доярка.

Сĕт отраслĕнче хуçалăх икĕ уйăх ытла ĕнтĕ ĕнесене паха утă-сăр, микро- тата макроэлементсемсĕр пуçне Чулхула облаçĕнчи куçса çӳрекен «Империал-НН» чикĕллĕ яваплăхлă общество хăйĕн хушма препарачĕсемпе вырăнта хатĕрлекен комбикормпа тивĕçтерсе пырать. Çапла вара паян хуçалăхри ĕнесем пĕлтĕрхи çак вăхăтринчен вăтамран 3-шер килограмм ытларах продукци параççĕ (12,8 килограмм). Сĕтри çу хисепне 4,1-пе танлаштарни, белок шайне 3,2-не çитерни, сарайсенче çĕнĕ оборудованисемпе ĕçлени продукцие пысăк хакпа сутасси патне илсе çитерчĕ.

– Çĕнĕлĕхсене ялан алла илсе ĕçлесе пырсан аталану çулĕнчен юлмасăр пурăнма пулнине кашниех куратпăр. Малашне те çапла пултăр тесе куллен ĕçе хавхаланса тухатпăр, – терĕ хуçалăхăн тĕп зоотехникĕ Э. Замятина.

Сарайсенчи тирпейлĕх майĕпен кашни фермăрах выльăх-чĕрлĕх патĕнче ĕçлекенсен кану пӳлĕмĕсене куçни те – ырă курăну. Кунта та кашни утăмрах тасалăх хуçаланать. Кану пӳлĕмĕсенче телевизорсем, микрохумлă кăмакасем ĕçлеççĕ. Пӳлĕмсенчи ăшă, ĕç тумтирĕ улăштармалли шкафсемпе ларса канмалли пукансем, таса сĕтел – кунта тирпейлĕх малти вырăнта пирки калаççĕ.

Хуçалăхри выльăх витисем тăрăх çӳренĕ май кооператив-заводăн тĕп выльăх тухтăрĕ Э. Любимова производство калăпăшĕ пирки тата выльăх чирĕсенчен хӳтĕленессипе епле ĕçлени çинчен тĕплĕ каласа пачĕ.

Хĕлĕн малтанхи 3 уйăхĕнче «Свобода» хуçалăхра пĕтĕмпе 328,1 тонна (пĕлтĕр 275,2 т) сĕт сунă, 92,8 тонна (2011 çулта 65,5 т) аш-какай туса илнĕ. Çулталăк пуçланнăранпа сыснасем талăксерен вăтамран 513 грамм (виçĕм çулхинчен 161 грамм ытларах), майракаллă шултра выльăхсем 721 грамм (111 грамм нумайрах) ӳт хушнă.

**А. БЕЛОВ.**

# Кăмăлĕпе çепĕç, ĕçĕпе маттур

## Ял-йышра хисеплĕ



Çын ĕçĕпе илемлĕ, чунĕпе пуян, тет ваттисен сăмахĕ. Тата шанчăклă юлташ ĕмĕрлĕх, теççĕ халăхра.

Ильинка ял тăрăхĕнчи Тренккăра пурăнакан Юлия Петровна Морозова çинчен калаçă пекех туйăнаççĕ çак сăмахсем. «Ăна курсан хаклă тăвана курнăн туйăнать, унпа ларса калаçсан кăмăл уçăлать, пурнăç сулĕне малалла çирĕппрех утăмсемпе утас килет», – çапла кăмăл-туйăм çуратать Юлия Петровна сывăх çыннисемпе юлташĕсенче. Яланах тараватт, ырă сĕнӳ парса хавхалантарма пултаракан вашават хĕрарăм вăл.

Юлия Петровнăн кун-çулĕ пуян. 1957 çулта Купăрля ялĕнче колхозник çемйинче кун çути курнăскер çемьери ачасенчен асли пулнă. Ун хыççăн – тепĕр виççĕн. Аслă хĕрĕ вара вăл – амăшĕн пулăшаканĕ, кĕçĕннисене ăс-тăн параканĕ, вăл вăхăтра тата килти хуçалăха тытса пыраканĕ те.

Сосновкăри тĕп шкултан вĕренсе тухнă хыççăн Юлия Чуманкассинчи вăтам шкулта вĕренет. Тепĕр икĕ çултан алла аттестат илнĕ хыççăн выльăх-чĕрлĕхпе аппаланма юратакан хĕр Патăрьелĕнчи ветеринари училищине çул тытать. Тăрăшни сая каймасть – Юлия Петровна алла диплом илнĕ выльăх-чĕрлĕх фельдшерĕ пулса тăрать.

Çамрăк специалист направленипе Тренккăри ветеринари пунктĕнче ĕçлеме тытăнать. Çавăнтанпах ĕçчен те ăста фельдшер пирки кăмăлсăр калаçакан пулман.

Ку тăрăхрах Юлия Петровнăн Турă çырни те пурăннă иккен. 1979 çулта çамрăк хĕр хăйĕнчен икĕ çул аслăрах ăста водителе Георгий Васильевича качча тухать. Юратупа килĕшӳ хуçаланакан çемьере икĕ ача çуралать – Алексейпа Альбина.

Шел пулин те, юратнă мăшăрĕ çамрăк хĕрарăмран питĕ ир уйрăлса каять: Юлия Петровна ачисене пĕччеллĕх пурнăç çулĕ çине кăларать. Юрать хăй пурăннă вăхăтра ăшă кăмăллă хунямăшĕ пулăшса пынă. Халĕ вара ӳссе çын пулнă ачисем хăйсем çемьеллĕ. Альбина хĕрĕпе Роман кĕрӳшĕ, Алексей ывăлĕпе Наталия кинĕ, Андрей, Ксения тата Семен мăнукĕсем – çаксен пархатарне курмалла пултăр Юлия Петровнăн.

Юлия Петровна хăйĕн пĕтĕм ĕçне-хĕлне выльăх-чĕрлĕхпе çыхăнтарнă. Паян та ир-ирех килти выльăх-чĕрлĕхпе кайăк-кĕшĕке апат панă хыççăн хуçалăхри сысна фермине çул тытать. Çĕнĕ ӳсĕмсем патне талпăнакан ĕçченĕн тăрăшулăхне хуçалăх ертӳçисем те асăрхамасăр хăварман, ĕçне яланах тивĕçлипе хаклаçнă. Обществăлла ĕçрен те аякра тăмасть Юлия Петровна. Суйлавсем вăхăтĕнче те акă чылай çул участокри суйлав комиссийĕн секретарĕ пулма шаннă ăна. Пушă вăхăт тупăнсан çыхма-тĕрлеме кăмăллать вăл. Кирек епле ĕçре те маттур, хастар. Çакна пуринчен ытла кӳршисем сисеççĕ пулĕ. «Питĕ уçăмлă, яланах тараватт», – теççĕ ун пирки вĕсем.

Çак кунсенче вара Юлия Петровна шăпах хăйĕн 55 çулхи юбилейне паллă тăвать. Иккĕленме те кирлĕ мар, ырă кăмăлĕшĕн, ĕçченлĕхĕшĕн тав туса саламлакансем чылай пулĕç: юлташĕсем, ĕçтешĕсем, кӳршисем... Ачисемпе мăнукĕсен саламĕ, тимлĕхĕ вара чи пахи, паллах. Хăйсен хаклă те юратнă çыннине саламласа ырлăх-сывлăхпа тату пурнăç сунаççĕ вĕсем.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

## Юнкорсем хыпарлаççĕ

# Хастаррисенчен тĕслĕх илетпĕр

Вĕренӳ çулĕн иккĕмĕш чĕрĕкĕ сисĕнмесĕрех иртсе кайрĕ. Уроксем, кружоксем, тĕрлĕ мероприятисемпе ăмăртусем пулса иртрĕç çав хушăра. Вĕсен шутĕнче М. Ломоносов çуралнăранпа 300 çул çитнине халалланă концертпа викторина та, Яков Ухсайпа Спиридон Михайлов юбилейĕсене паллă туни те, вĕсен пултарулăхне тĕпчени те...

Район шайĕнче иртнĕ олимпиадăсем çинче уйрăммăнах чарăнса тăрас килет. Питĕ хастар хутшăнчĕç унта пирĕн шкул ачисем – пурĕ 13 малти вырăн. Акă 11 класра вĕренекен Анна Платонова историпе, экономикăпа 1-мĕш вырăнсем, акăлчан чĕлхипе 3-мĕш вырăн йышăннă пултарчĕ. Унăн 7 класра вĕренекен Марина йăмăкĕ те маттур: физикăпа 1-мĕш, обществознанипе 2-мĕш, историпе 3-мĕш, чăваш чĕлхипе 4-мĕш вырăнсем йышăнчĕ. Ытти классенче те çакăн пек пултаруллă ачасем пур. Çав класрах вĕренекен Татьяна Силова вырăс чĕлхипе 1-мĕш вырăн, 9 класри Наталия Емельянова акăлчан чĕлхипе 3-мĕш вырăн, 11 класра вĕренекен Федор Иванов биологипе 2-мĕш вырăн, Анастасия Андреева технологипе 2-мĕш вырăн çĕнсе илме пултарчĕç. Район шайĕнче пирĕн шкулта вĕренекенсем хăйсене тивĕçлипе кăтартнăшăн пурте савăнатпăр, мухтанатпăр.

**Н. ЕМЕЛЬЯНОВА,**
***Ярапайкассинчи вăтам шкулта вĕренекен.***

***Олимпиада çитĕнĕвĕсем пирки Атапайри тĕп шкулта вĕренекен Вероника Замкова та çырса пĕлтерчĕ. Унăн çырăвĕпе те паллаштаратпăр:***

«Ку вĕренӳ çулĕнче пирĕн шкул ачисем район шайĕнче иртнĕ олимпиадăсене хутшăнса лайăх кăтартусемпе савăнтарчĕç. Чи пултаруллисен ретĕнче çаксем: Степан Зайцев, Оксана Садовникова, Алексей Вязов.

Уйрăмах Оксанăна палăртса хăварас килет. Вăл вырăс чĕлхипе, литературипе иртнĕ олимпиадăсенче 3-мĕш вырăн йышăнма пултарчĕ (вĕрентекенĕ Алиса Николаевна Иванова). Маттур хĕр ачапа эпир мăнаçланатпăр, унран тĕслĕх илетпĕр. Ăна вара малашне те çитĕнӳсем тума сĕнетпĕр».

## Граждансене йышăнаççĕ

# Ыйтусем пур пулсан

Ыран, январĕн 12-мĕшĕнче, Шалти ĕçсен министерствин районти уйрăмĕн иртнĕ çулхи ĕçне тишкереççĕ. Çавна май республикăри полици пуçлăхĕн çумĕ П. Федоров та Муркаша килме палăртнă. Полици сотрудникĕсемпе, право сыхлав органĕсен ертӳçисемпе тата ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсемпе пĕрле ĕçе тишкернĕ хыççăн вăл граждансене йышăнать. Çапла вара Шалти ĕçсен министерствин районти уйрăмне 13 сехетрен пуçласа 15 сехетчен эсир хăвăрăн ыйтусемпе пыма пултаратăр.

***Шалти ĕçсен министерствин Муркаш районĕнчи уйрăмĕ.***

## Спорт декади

# Канмалли кунсем – спортра

Çĕнĕ çулăн малтанхи кунĕсем йăлана кĕнĕ тăрăх спорт ăмăртăвĕсемпе пуян пулчĕç.

Районти хоккей федерацийĕн кубокне çĕнсе илессишĕн январĕн 4–5-мĕшĕсенчи Раштав ăмăртăвĕнче «Калмыково» команда çĕнтернĕ.

Иртнĕ çулхи итогсем тăрăх «Сывлăх» ФСКра чи вăйлă 4 команда волейболла вăй виçнĕ. Хĕрӳ вăйăсенче «Передовик» СХПК команди кубок çĕнсе илме пултарнă.

Районти вĕренекенсен шашка-шахмат турнирĕсем те интереслĕ иртнĕ. 9 вăтам тата 8 тĕп шкул хутшăннă унта. Тĕрлĕ ӳсĕмсенче малти вырăнсене Чуманкассинчи, Ярапайкассинчи тата Çатракассинчи вăтам шкулсен командисем палăрнă. Тĕп шкулсем хушшинче – Шетмĕпуçĕнчи тата Кашмашри шкулсем. Çак турнирсен çĕнтерӳçисене вĕрентӳ пайĕ дипломсем парса кăна чысламан, Хĕл Мучин пылак парнисемпе те сăйланă.

Республика Пуçлăхĕн М. Игнатьевăн парнисене çĕнсе илме январĕн 6-мĕшĕнче, ытти районсемпе хуласенчи пекех, Муркашра та спорта юратакан çемьесен стадиона пухăннă. Йĕлтĕр йĕрĕ çине ашшĕ, амăшĕ тата пĕр ачи тухнă. Ачасен çул ӳсĕмне кура малти вырăна çак çемьесен тивĕçнĕ: Çатракасси ял тăрăхĕнчи Скворцовсем, Ярапайкасси ял тăрăхĕнчи Дашковсем тата Хорнуй ял тăрăхĕнчи Колесниковсем.

Çав кунах Муркашри бассейнра та çемьесен ăмăртăвĕ иртнĕ. «Атте, анне тата эпĕ – спорт çемйи» ăмăртăва 5 çемье хутшăннă. Çĕнтерӳçĕсем Муркаш ял тăрăхĕнчи Потаповсем пулса тăнă.

**Хамăр инф.**

## Прогноз погоды

| | среда 11 января | | | | четверг 12 января | | | | пятница 13 января | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| Местное время | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 |
| Облачность % | | | | | | | | | | | | |
| Осадки мм | | | | | | | | | | | | |
| Температура °C | -12 | -11 | -10 | -10 | -10 | -11 | -7 | -7 | -6 | -5 | -4 | -3 |
| Давление мм | 748 | 747 | 746 | 745 | 744 | 743 | 741 | 739 | 737 | 736 | 733 | 731 |
| Влажность % | 91 | 88 | 89 | 92 | 89 | 93 | 89 | 89 | 92 | 91 | 87 | 94 |
| Ветер м/сек | Ю 3 | Ю 1 | Ю-З 3 | Ю-З 3 | Ю-З 4 | Ю 3 | Ю 5 | Ю 6 | Ю 7 | Ю 6 | Ю 8 | Ю 10 |
| Солнце восход/заход | | 09:18 | 16:43 | | | 09:17 | 16:45 | | | 09:16 | 16:46 | |
| Луна восход/заход фаза | | 19:51 | 09:47 | | | 21:14 | 10:06 | | | 22:37 | 10:22 | |

* * *

Я, собственник земельной доли Данилов Димитрий Захарович, объявляю о выделении земельного участка в счет земельной доли общей площадью 5,12 га, расположенного на территории землепользования СХПК им. Чкалова Моргаушского района Чувашской Республики, Чуманкасинского сельского поселения, участок расположен в западной части кадастрового квартала 21:17:271401.

Я, собственник земельной доли Данилова Ираида Николаевна, объявляю о выделении земельного участка в счет земельной доли общей площадью 1,28 га, расположенного на территории землепользования СХПК им. Чкалова Моргаушского района Чувашской Республики, Чуманкасинского сельского поселения, участок расположен в западной части кадастрового квартала 21:17:271401.

Я, собственник земельной доли Данилов Николай Димитриевич, объявляю о выделении земельного участка в счет земельной доли общей площадью 2,56 га, расположенного на территории землепользования СХПК им. Чкалова Моргаушского района Чувашской Республики, Чуманкасинского сельского поселения, участок расположен в западной части кадастрового квартала 21:17:271401.

Все претензии принимаются в течении месяца после выхода объявления в администрации Чуманкасинского сельского поселения.

* * *

Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды из категории «земли населенных пунктов» с кадастровым номером 21:17:280401:140, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Шатьмапосинское сельское поселение, д. Авданкасы, под установку базовой станции сотовой связи (контейнер-аппаратная и железобетонный столб СК-26), площадью 40 кв.м.

Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты № 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.

## Тав тăватпăр

Мăн Токшик ялĕнче пурăннă Ион Архипович Архипова юлашки çула ăсатма пулăшнăшăн, пирĕн хуйха пĕрле пайланăшăн пуххилсене, ял-йыша, ЧР Çар комиссариачĕн Муркаш тата Элĕк районĕсен уйрăмне тав сăмахĕ калатпăр.

**Архиповсен çемйи.**

## Пĕлтерӳсем. Объявления


**ЛЕСОПТОРГ реализует пиломатериалы:**
**Доски: 50х100, 50х150, 50х200, 25х100, 25х150, 25х200 – 1 куб. м. от 5000 руб.**
**Изготовим сруб бани 3мх5м от 45000 руб. В наличии – сухие дрова.**
**Доставка бесплатно от 10 куб. м.**
**Тел.: 8-919-665-11-88, 8-905-343-91-07. 2-24.**

**Ĕне, вăкăр, тына, пăру, сурăхсем туянатпăр.**
**Тел.: 8-903-063-07-57. 3-5.**

* * *

**Возьму в аренду торговую площадь для реализации алкогольной продукции на выгодных для вас условиях. Тел.: 8-919-679-72-71. Возьму в аренду торговую площадь на длительный срок. Тел.: 8-903-322-24-88. 6-10.**

* * *

**Требуются швеи с опытом работы во вновь открывающийся цех в с. Моргауши. Соц. пакет.**
**Тел.: 8-927-667-37-30, 8-927-668-29-18. 2-2.**

* * *

**Требуется инженер-проектировщик, знание ПК.**
**Тел.: 8-903-345-75-76, 62-6-03. 3-5.**

* * *

**Семья снимет благоустроенную квартиру, дом на длительный срок. Тел.: 8-927-995-09-23.**

* * *

**Продаю сено тюкованное, грабли навесные.**
**Тел.: 8-927-848-2-848.**

**Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Изготовим на заказ: срубы, беседки любого размера. Цена договорная, доставка по району бесплатно. Тел.: 8-927-667-28-32, 8-919-679-18-11. 1-10.**

**СПУТНИКОВОЕ ТВ от 3500 руб. Установка в короткие сроки, качество, гарантия, обслуживание.**
**Тел.: 8-927-852-74-75. 2-2.**


**К сведению бытовых потребителей электроэнергии!**

Постановлением Государственной службы Чувашской Республики по конкурентной политике и тарифам от 15 ноября 2011 г. № 40-15/э "Об установлении тарифов на электрическую энергию, поставляемую населению и приравненным к нему категориям потребителей, по Чувашской Республике" (зарегистрировано Министерством юстиции Чувашской Республики 12 декабря 2011 г., регистр. № 1021) утверждены тарифы на электрическую энергию, поставляемую ОАО "Чувашская энергосбытовая компания", на 2012 год для населения и потребителей, приравненных к категории население.

С 1 января 2012 года будут применяться следующие тарифы на электроэнергию для населения Чувашской Республики, проживающего:
- в сельских населенных пунктах – 1,46 руб./кВт•ч;
- в городских населенных пунктах:

в домах, оборудованных в установленном порядке стационарными электроплитами и (или) электроотопительными установками, – 1,46 руб./кВт•ч;

в домах, оборудованных в установленном порядке стационарными газовыми плитами, – 2,08 руб./кВт•ч.

С 1 июля 2012 года будут применяться следующие тарифы на электроэнергию для населения Чувашской Республики, проживающего:
- в сельских населенных пунктах – 1,53 руб./кВт•ч;
- в городских населенных пунктах:

в домах, оборудованных в установленном порядке стационарными электроплитами и (или) электроотопительными установками, – 1,53 руб./кВт•ч;

в домах, оборудованных в установленном порядке стационарными газовыми плитами, – 2,19 руб./кВт•ч.

**ОАО «Чувашская энергосбытовая компания».**

Администрация Моргаушского района выражает глубокое соболезнование родным и близким Яковлева Н.С., начальника БУ ЧР «Моргаушская районная станция по борьбе с болезнями животных» Государственной ветеринарной службы Чувашской Республики, по поводу кончины матери

**ТИМОФЕЕВОЙ**
**Марии Тимофеевны.**

Администрация Моргаушского района, Совет Старейшин при главе администрации района, районный Совет ветеранов выражают глубокое соболезнование ветерану труда Тяминой О.В. по поводу трагической смерти дочери

**ГАЛИНЫ.**

Районти выльăх чирĕсемпе кĕрешекен станци коллективĕ станци ертӳçин Н. Яковлевăн амăшĕ

**Мария Тимофеевна**
**ТИМОФЕЕВА**

вилсе кайнă пирки тарăннăн хурланни çинчен пĕлтерет.

Москакассинчи пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан вăтам шкул коллективĕ кунта касхи хуралта ĕçленĕ

**Василий Иванович**
**ПЕТРОВ**

вăхăтсăр вилсе кайнă пирки çемйипе тата тăванĕсемпе пĕрле тарăннăн хурланни çинчен пĕлтерет.

Администрация Кадикасинского сельского поселения выражает глубокое соболезнование председателю Совета ветеранов Тяминой О.В. в связи безвременной кончиной дочери

**ГАЛИНЫ.**


**Муркаш районĕнчи «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат**

**УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ:**

Чăваш Республикин Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерстви.

ЧР Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерствин «Муркаш районĕн «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат редакцийĕ» автономи учрежденийĕ.

**Тĕп редактор А.И. ТИХОНОВ.**

АДРЕС: 429530, Чăваш Республики, Муркаш ялĕ, Мир урамĕ, 9А çурт.
ТЕЛЕФОНСЕМ: тĕп редактор - 62-1-36, яваплă секретарь - 62-2-82, бухгалтери - 62-1-35, пайсем: общество пурнăç пайĕ - 62-2-82, экономика тата социаллă пурнăç пайĕ - 62-1-38.
Факс: 62-1-36; E-mail: morpress@cbx.ru, redaction@cbx.ru

Çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникаци сферине пăхса тăракан Федераллă служба Чăваш Республикипе – Чăваш Енпе ĕçлекен управленийĕ 2009 çулхи раштавăн 7-мĕшĕнче ПИ ТУ 21-00073 № регистрациленĕ.

Калăпăшĕ 1,0 пичет листи.

Ал çырăвĕсене рецензилемеççĕ, каялла тавăрса памаççĕ, 2 страницăран пысăкраххисене йышăнмаççĕ.

Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.

ИЗДАНИ ИНДЕКСĔ: 54822.
Хаçат чăвашла юн тата шăмат кунсерен тухать.
Номер дежурнăйĕ Николаева Н.Н.
Пичете панă 10.01.2012 ç.
Пичете памалли вăхăт: графикпа – 17 сех. 20 мин, чăннипе – 17 сех. 20 мин.
Заказ Тираж 4520.

Номер набран и сверстан в АУ ЧР «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.